**Тусăма – тутар çыруçине**

*К.Юлдашева*

Çулçăсем вĕçсе ӳкеççĕ
Кантăкран сĕтел çине,
Ман килте паян, пиччеçĕм.
Эс ларан кĕрекене.

Чăвашра, эппин, тутарăм,
Эс те пул-ха чăвашла:
Алтăрпа сăра тытар-и,
Япăх мар пирте хăмла.

Чей вара — тутар йăли вăл,
Хам сăйланнă сахал мар.
Чашкăртăр мулла пек кивĕ
Çутă хырăм — сăмавар.

Эп «Урман кăзне» итлесшĕн —
Хисеп ту-ха ман çурта!..
Çул çине юрлар, иптешĕм:
«Чăт-чăт, хăта, чăт, хăта».

Туспăхшăн сăра чашлатăр,
Тыт-ха, пирĕн хурăнташ!
Ман кĕрекере янратăр
Çеçпĕлпе пĕрле Такташ.

1953

*Айхи, Г. Тусăма – тутар çыруçине : [сăвă] // Айхи, Г. Сăвăсемпе поэмăсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 15.*